# Освѣщеніе

МУЖСКАГО ЧУВАШСКАГО

# АЛЕКСАНДРО-НЕВСКАГО

## МОНАСТЫРЯ,

Казанской губерніи, Козьмодемьянскаго уѣзда,

СОВЕРШЕННОЕ

Высокопреосвященнѣйшимъ Димитріемъ,

Архіепископомъ Казанскимъ,

**15 Іюня 1903 года.**

НА ЧУВАШСКОМЪ ЯЗЫКѢ.

СИМБИРСКЪ.

ТИПО-ЛИТОГРАФІЯ А. Т. ТОКАРЕВА.

1904.

От Переводочной Коммиссіи Православнаго Миссіонерскаго Общества печатать разрѣшается. Января 13 дня 1904 г.
Предсѣдатель Коммиссіи, Профессоръ Казанской Академіи *М. Машановъ*.



*Хусан кĕпĕрнинҫи, Ҫикме уйасĕнҫи, Александр Невскій йатҫепе лартнӑ тҫаваш-арçын монастырĕ.*

*Малтан лартнӑ кĕлĕ пӯртҫĕ (часовня).*



*Хусан кěпěрнинтђи, Ђикме уйасěнтђи, Александр Невскій йатђěпе лартнă тђăваш-арçын монастырě.*

*Çěртме уйăхин (іюнěн) 14-мěш кунě, 1903 çулта, Ђиркӳне кěл-туса тасатас умěн тулта, усă çěрте тунă çěрлехи кěлě.*

8 стр.—Кар. № 2.



*Хусан кĕпĕрнинҫи, Ҫикме уйасĕнҫи, Александр Невскій йатҫĕпе лартнă тăваш-арçын монастырĕ.*

*Малтанхи монахсенĕн уйрăм уйрăм пурăнакан пÿлĕмĕсемлĕ пÿрт.*

15 стр.—Кар. № 3.

## ХУСАН КӖПӖРНИНҪИ, ҪИКМЕ (КОЗМОДЕМЬЯНСК) УЙАСӖНҪИ АЛЕКСАНДР НЕВСКІЙ ЙАҪӖПЕ ЛАРТНӐ ҪӐВАШ-АРҪЫН МОНАСТЫРНЕ ХУСАНТИ АРХІЕПИСКОП ВЫСОКОПРЕОСВЯЩЕННѢЙШІЙ ДИМИТРІЙ КӖЛ-ТУСА ТАСАТНИ (ОСВЯТИТ ТУНИ). ҪӖРТМЕ УЙӐХИН (ІЮНӖН) 15-МӖШ КУНӖНҪЕ, 1903-МӖШ ҪУЛТА.

Александр Невскій йаҫӗпе ҫӗнӗрен кӑларнӑ ҫӑваш-арҫын монастырӗ Ҫикме уйасӗнҫе, Ҫиркӳлӗ Кӗҫнерни Пасарӗнҫен тӑвата ҫухрӑмра, Карӑшлӑх тийекен пӗр паллӑ вырӑнта ларат. Вӑл сӑртлӑх вырӑн, ӑна вӑрман хупласа илнӗ; унта халиҫҫен ҫын ӗҫлесе пурӑнман. Монастыр ҫиркӗвӗне, тата унӑн хӑш-хӑш хуралтисене ту ҫине лартнӑ. Ҫав монастыр вырӑнне ҫи малтан пырса пурӑна пуҫланӑ ҫынсенӗн пӗҫӗкҫеҫҫӗ пӳрҫӗсем ҫурма тура, пӗр пит илемлӗ курӑнса тӑракан сӑрт ҫинҫе ларасҫӗ. Монастыр ҫурҫӗсенҫен айалалла, сӑрт айӗпе пӗр Сӗнтӗр йатлӑ пӗҫӗкҫеҫҫӗ ҫырма йухса выртат.

Вырӑс патшалӑхӗнҫи пур монастырсене те ҫын пурӑнакан вырӑнсенҫен, ҫын иртсе ҫӳрекен ҫулсенҫен айакка тунӑ; вӗсене ӑҫта вӑрманлӑх, ӑҫта шурлӑх, ӑҫта пушӑ вырӑн, ҫавӑлте пуҫласа тунӑ. Сӑвапшӑн тӑрӑшса пурӑнмашкӑн монахсене ҫавӑн пек вырӑн аван. Александр Невскій йаҫӗпе тунӑ ҫӑваш-арҫын монастырне ҫав вырӑна лартни сӑвапшӑн тӑрӑшса пурӑннӑ ӗлӗкхи вырӑс монахӗсене кура туни анҫах мар, унта, паллах, Туррӑн тӗлӗнмелле ӗҫӗ курӑннӑ, унта Туррӑн пысӑк хӑваҫӗ пулнӑ.

Ҫав ҫӑваш монастыр вырӑнӗ ӗлӗкрех етем пурӑнман, тискер пушӑ ҫӗр пулнӑ, таса пурӑнӑҫ тӗлешӗнҫен каласан та вӑл сем-тӗттӗм вырӑн пулнӑ. К тискер, пушӑ вырӑн ҫӑнне те ҫӑн ӗмӗрлӗх пурӑнӑ-

çалла йухакан ҭун шывĕшĕн çунса выртакан çĕр пулнă. Çак авалхи вăрман тавăрашĕнҭе пурăнакан ҭăвашсем тахçанах Евангеліе сăмахне илтнĕ пулсан та, таса тĕне кĕрсе çутăлнă пулсан та, вĕсем хайсен авалхи суйа тĕнри суйа йĕркисенə,ҭăн тĕн йĕркисенҭен хытăрах тытса пурăннă. Вĕсем ҭăн Турра пуççапакансемпе пĕр шутра пулсан та, хайсен ашшĕ-аслашшĕсен киреметҭĕсене пуççапма пăрахман. Вĕсем ĕненнĕ тăрăх, хайсен çав Карăшлăх тийекен çĕрĕнҭе вĕсен хайсем хисеплесе пурăнакан киремет вырăнĕ пулнă. Унта вĕсем хайар, аслă киремет, усал сывлăш пурăнать тенĕ; өтем пĕҭҭен куракан йывăрлăх та, пĕтĕм халăхпа куракан йывăрлăх та пĕтĕмпе çавăнтан килет тенĕ. Тата çавăлтех, инçе мар, пĕр Сар-тăван тийекен çĕрте, çав икĕ тĕнлĕ ҭăвашсен хайсем хисеплесе пурăнакан тепĕр киремет вырăнĕ пулнă. Ҭăвашсем çак йуманлăха, çак сăртлă, путăк-шăтăк тĕттĕм çĕре пуçтарăна пуçтарăна, аслă киремет кăмăлне тупас тесе, ăна пуççапнă, ҭӳк тунă. Халăх хушшинҭе пĕр-пĕр йывăрлăх, таса мар-мĕн пулсан, выçлăх çулсенҭе, ҭир-ҭĕр нумай çулсенҭе, тавăрари йалсенҭен, йе айакран урăх уйассенҭен те, ҭăвашсем çавăнти кирөмөте пуççапма, ăна ҭӳк тума çавăнта пĕр çĕре пуçтарăннă. Паллах ĕнтĕ: çав ҭăваш монастырĕ тавăрашĕнҭи йуманлăхра, унти путăк-шăтăк вырăнта ĕлĕк суйа тĕнĕн суйа йĕркисем тĕреклĕ хӳме ăшĕнҭе тăнă пек сыхланса тăнă, унти ҭăвашсене ҭăн тĕнпе çутăлма çавсем пит ҭарса тăнă.

Тавта-пуç Турра! Христосăн, ҭăн тĕнĕпе сăвaплă пурăнасшăн тăрăшакансем çавăнти ҭăвашсем хушшинҭенех тухрĕç. Вĕсем школасенҭе вĕрентнипе, ҭиркӳ кĕтӳçисем (пупсем) Христос тĕнне çавăрас тесе ӳкĕтленипе суйа тĕн йăнăшне, суйа тĕнĕн йăлисен нимĕн усси те çуккине, суйа тĕншĕн хайсене усăшăн йумăççем анҭах тăрăшса сарса тăнине витĕрех пĕлҭĕç. Шавах

Турă çинҫен шухăшласа, кĕл-туса пурăнас тесе, хăйсемпе пĕр халăх çыннисене (ҫăвашсене) суйа тĕнпе атапса пурăннинҫен сивĕтес тесе, çав ҫăн тĕншĕн тăрăшакан ҫăвашсем, пур те хăраса тăракан киремете хирĕç пырсах, Карăшлăхри киремет вырăнне, ту айаккине пырса пурăна пуçланă. Пушă хирте пĕр-пĕҫҫен кĕлтуса пурăннă ĕлĕкхи çынсем пек, вĕсем çавăнта ҫăн тĕн тăрăх кĕл-туса, Турăран хăрама вĕренсе пурăннă.

Вĕсем çапла хăйсене хăйсем хытă тытса, Турра кĕлтуса пурăннине курса, çав сăвапла пурăнаçшăн тăрăшакансем патне таврари йалсенҫен ырă пурăнаçлă ытти ҫăвашсем те пĕҫĕккĕн пĕҫĕккĕн пыра пуçланă. Вĕсем унта Турă сăмахне вуланине, псаломсем, ҫиркӳ йуррисем йурланине итлесе пурăннă. Пĕрле кĕл-тума вĕсем унта, ту çине вăрмана йупа пек турăш вырăнĕ (часовня) лартнă: вăл турăш вырăнĕ халĕ те тăрать-ха. Çапла вара малтан суйа тĕн киремеҫĕсене пуççапса, ҫӳк-туса тăнă таврара пĕҫĕккĕн пĕҫĕккĕн ҫăн Турă йаҫĕ сарăла пуçланă. Çавăлте сăвапшăн тăрăшакан ҫăвашсем нумайҫҫен çав майпа кĕл-туса пурăннă.

Суйа тĕнĕн тĕттĕмĕ Христосăн ҫăн çутти умĕнҫе тăрайман, сирĕлнĕçем сирĕлнĕ. Христос çинҫен вĕрентнĕ çутă çавăнти ҫăваш хушшинҫи тĕттĕм ăшне пĕҫĕккĕн пĕҫĕккĕн кĕрсе, çав халăхăн ăсĕсене çутатса пынă, вĕсенĕн аҫа кăмăлĕ пек ҫас йышăнакан кăмăлĕсене ăшăтнă, нумайĕшĕ вара Евангелiери сăмаха пĕтĕм кăмăлтан йышăннă. Ҫăн тĕншĕн тăрăшса, сăвапла пурăнас тийекенсем нумайланса пынă. Хăйсенĕн ĕмĕрне монах пурăнаçĕпе ирттерме ĕмĕт тытакансем унта пĕр вăтăр çынна йахăн пухăннă. Çав çынсем монахла пурăнса Христос тĕнне сарасшăн тăрăшнине таврари ҫăвашсем те пит кăмăл тунă. Кĕçнерни Пасарĕпе Ахманей, Йункă прихотĕнҫи ҫăвашсем çав вырăна ҫăн тĕне тытса пурăннă аслă княç святой Александр Невскiй йаҫĕпе

ђăваш-арçын монастырĕ лартма шухăш тытнă. Çав шухăшпа вĕсем ђиркÿсен пуçлăх-çыннисем патне ыйтма çÿреме хăйсен хушшинђен шанђăклă çынсем суйласа хунă; суйласа хунă çынсенђен пĕри, пит тăрăшаканни, Кузьма Иванов йатлă ђăваш монах пулнă. Еђкеренпе Хађăк-касси ђăвашĕсем монастыр валли хăйсен (пайăр) йат çĕрне виçĕ теçеттина ахалех касса панă; вăл çĕр вăрманлăх пулнă. Ырăлăх тăвакан ђăвашсем пулăшнипе çав çĕр çине Турра кĕл-тумалли пĕр виçĕ ђÿређелĕ пÿрт тунă, монахсене пурăнма виçĕ пÿрт туса, улăмпа витсе лартнă, тырă хума икĕ кĕлет тунă, тата мунђа, кил-çутра кирлĕ ытти хуралтăсене те лартнă. Кĕлĕ пÿртне турăшсем лартса тухса илемлентернĕ; вăл турăшсене те ырăлăх тăвакан ђăвашсем тăрăшнипе туйаннă. Турăшсем унта çаксем пулнă: 1) престол хыçĕнђе çакăнса тăракан хĕреспе Турă Амăшĕ сăнĕ, 2) Турă Амăшин Өеодоровскій тийекен сăнĕ, 3) ђăн тĕне тытса пурăннă аслă княç святой Александр Невскій сăнĕ, 4) вуникĕ аслă праçникĕн ÿкерђĕкĕ (икконĕ), 5) святой Ефрем Сирин монахăн сăнĕ, асаплантарнине тÿссе вилнĕ Анастасіян, Агрипинан сăнĕсем, тата ытти святойсен сăнĕсем те, Турă çырăвĕнђи ĕçсене кăтартакан ÿкерђĕксем те пулнă.—*(Кар. № 1).*

Унта çынсем ырă сунса панă йапаласем тата та пур: ылттăнланă кĕмĕл хĕрес, кĕмĕлпе витнĕ Евангеліе, кĕмĕл потирпа кĕмĕл дискос, вĕсен тавăрашĕнђе тыткаламалли йапаласем, ђиркÿре кĕл-тумалли хăш хăш кĕнекесем, ђăн тĕн çинђен вĕрентекен, ăса кÿртекен тĕрлĕ кĕнекесем, тăватă пĕђĕк ђан, тата урăх та нумай йапала.

Çапла çав таврари ђăвашсем çак монастыре лартасшăн пур те пит кăмăл тунă. Ырăлăх тăвакан çынсем çав таса ĕçе пулăшса унта шавах ăна-кăна парса тăнă.

1902-мĕш çулта çав таврари темиçе йал ђăвашĕсем хăйсем суйласа хунă шанђăклă çыннисем урлă пит

вăйпа, çине тăрса ыйтнă тăрăх, Çĕр ĕçĕпе Патшалăх пурлăхне тытса тăракан Министр çĕнĕ монастыр валли икĕ пай çĕр касса панă. Пĕринҫе вунă теçеттина пулнă; ăна Кĕçĕн-Шашкар дачинҫен монастырĕн пĕтĕм çурҫĕ, пахҫи тавăрашĕ валли панă; тепĕринҫе 70 теçеттина та 500 тăваткăл хăлаç (ҫалăш) пулнă; ăна ĕçлесе, тырă-пулă акса тăма малтанхи пайĕпе ҫиклеш Пихтули дачинҫен касса панă. Анҫах малтанхи çĕрĕ çинҫе ÿсекен 7 теçеттина вăрманшăн çĕнĕ монастырĕн хыснана ултă çул хушшинҫе 3,598 тенкĕ те 88 пус укçа тÿлемелле пулнă. Вăл укçана хыснана тÿлеме ҫăваш йалĕ Хаҫăк-касси хăй çине илнĕ; вĕсем 1,263 тенкĕ те 45 пусне çавăн хыççăн ҫасах тÿленĕ.

Патшалăхран касса панă çĕр монастыр çурҫĕсене лартма та, монастырте вăл-ку кирлĕ йапала тĕлĕшĕнҫен те çителĕклине курса, Святĕйшій Синод, çав 1902-мĕш çултах, Александр Невскій йатлă хурса, ҫăваш-арçын монастырĕ тума хушнă. Монастыр пуçлăхне Антоній йатлă игумена хунă; вăл хăй ҫăваш; монахла пурăнма вăл Васил-Сурск патĕнҫи Михаил Архангел монастырĕнҫе пуçланă. Çапла Турă пулăшнипе, Турă мухтавĕшĕн тăрăшакан çынсем кĕл-тунипе, Александр Невскій йаҫĕпе ҫăваш-арçын монастырĕ пуçланнă.

Монастыр пуçлансан, унти монахсенĕн тата ҫиркÿ лартас тĕлĕшрен, Турăран ырăлăх илсе тăмалли çав пит паха вырăн тĕлĕшĕнҫен, ун урлă çавăлти ҫăвашсене те вĕрентсе ырăлăх тăвас тĕлĕшрен пит пысăк шухăш пулнă; Турă вĕсене çав хаклă йапалана та хăйсем пит ытлашши асапланмасăрах, вăл-ку йапала пĕтермесĕрех тупма пулăшнă. Ҫиркÿлĕ Кĕçнерни Пасарĕнҫе ҫул ҫиркÿ туса пĕтериҫҫен пĕр вăхăта лартнă кĕл-туса тăмалли пÿрт пулнă; ҫиркÿне туса пĕтерсен, вăл кĕлĕ-пÿрҫĕ ахалех тăнă. Çав прихотри çынсем вара ăна, Архіерей ирĕк тунипе, çак монастыре ахалех панă. Çĕнĕрен

пуҫланнă монастырĕн монахĕсем ҫав пит паха парнене вĕсенђен ђунтан-вартан тав-туса илнĕ.

Кĕлĕ пӳртне ĕлĕкхи вырăнĕнђен куҫарса, монастырĕн патшалăхран панă ҫĕрне, ту ҫине лартнă. Ђиркӳ хăй ĕлĕкхи кĕлĕ-пӳрђĕ майлах йулнă: вăл пĕренерен тунă ахаљ пӳрт майлах тăвată кĕтеслĕ ҫурт пек ларать; анђах унăн ҫумне икĕ пуҫĕнђен икĕ пура пураса ҫыпăҫтарнă; хĕвел тухĕҫ йенђен алтар валли, хĕвел анăҫĕ йенђен ђиркӳ умĕ валли. Ђиркĕвĕ ҫавăрака тăрăлă, ун ҫине хĕрес лартнă. Ђиркӳн тăрăшшĕ ултă хăлаҫ (ђалăш), урлăшĕ сакăр аршăн. Вăл ђиркӳ питĕ ђухăн: иконостасĕ пĕр йĕркелĕ анђах, ăна тĕттĕм-хĕрлĕ сăрăпа сăрланă. Иконостаса Іисус Христоспа Турă Амĕшин пĕђĕкҫеҫҫĕ тунă ҫăнĕсенђен пуҫне тата ђиркӳ праҫникин ђăн тĕне тытса пурăннă аслă княҫ святой Александр Невскій сăнне, хăватсем тăвакан святой Николайăн сăнне, ҫĕр пӳртре пурăннă Антоній монахăн сăнне лартнă. Патша алăкне хăмаран тунă. Ун ҫине Евангеліе ҫыракан тăвată апостол сăнĕсене, тата Архангел Гавріил таса Хĕр Маріяна ырă хыпар каланине ӳкернĕ. Патша алăкĕ тĕлне ҫӳле Аслă апат ҫинине ӳкернĕ. Ђиркӳ пĕренисем шалтан та, тултан та ҫап-ҫарах, вĕсене сăрламан. Ҫĕнĕ тунă ђăваш-арҫын монастырĕ пит ђухăн-ха: унта ылттăн та, кĕмĕл те йăлтăртатса тăмасть. Анђах пирĕн халђхи пур ђаплă вырăс монастырĕсем те малтан ҫавăн пекех ђухăн пуҫлана пуҫлана кайнă. Уптан вара пурăна киле тин йерри-йеррипе ђаплăланнă, ђаплă ђиркӳсем тутарнă. Хăватлă Турă ђăваш монастырне ҫапла ђухăнăн та пулин пуҫланса кайма пулăшрĕ пулсан, ăна ĕнтĕ малашне те пăрахмĕ.

Кĕл-туса тасатма ђиркӳ ҫуркунне пуҫламĕшĕнђе хатĕр пулнă. Хусанти Архіепископ, Высокопреосвященнĕйшій Димитрій, Хусан кĕпĕрнинђи вырăс мар халăхсене (ђăвашсене, тутарсене, ҫармăссене, арсене) хăйĕн

Аслӑ кӗтӳҫӗ тивӗҫӗпе, Христос тӗнӗпе ҫутӑлтарасшӑн тӑрӑшнӑ тӑрӑх, вӑл ҫӑваш монастырӗ ҫиркӳне, ҫав таврари тӗттӗм ҫӑвашсене ҫутӑлтарса тӑрас ҫутта, хӑй пырса кӗл-туса тасатма кӑмӑл тунӑ.

Ҫиркӗве кӗл-туса тасатмалли вӑхӑта Архіерей ҫӗртме уйӑхин 15-мӗш кунне хунӑ. Хӑй вӑл Хусантан ҫав уйӑхӑн 4-мӗш кунӗнҫе тухнӑ. Ун ҫухне вӑл хӑй епархийӗне ҫӳреме ҫӑн малтан пуҫласа тухнӑ. Ҫав тухӑмӗнҫе Архіерей хӑш-хӑш хуласене, саласене (ҫиркӳлӗ йалсене), монастырсене ҫитсе, унти ҫиркӳсене пӑхса тухма хисеп тунӑ. Вӑл вӑрӑм, пит ывӑнса ҫӳресе, Шупашкара, Йетӗрнене, Ҫикмене ситнӗ; Ҫикме уйасӗнҫи хӑш-хӑш саласене, монастырсене пӑхса тухнӑ; унтан вара ҫӗртме уйӑхин 14-мӗш кунӗнҫе Александр Невскій йаҫӗпе лартнӑ ҫӑваш-арҫын монастырне пынӑ.

Архіерейе унта пит ҫаплӑ кӗтсе тӑнӑ. Ҫав ҫӗнӗ монастыр таврашӗ никам пурӑнман вырӑн, вӑрманлӑх пулин те, унта пыма такӑр ҫул та пулмин те, темиҫе пин те пулӗ ҫӑваш халӑхӗ пуҫтарӑнса, хӑйсен Архіерейӗ килессине кӗтсе тӑнӑ. Монастырсене пӑхса тӑракан (благочинный) архимандрит Аркадій, ҫӑваш монастырин пуҫлӑхӗ игумен Антоній, ҫав таврари ҫиркӳсене пӑхса тӑракан пуп (благочинный) А. Добросмыслов, тата ҫывӑхри ытти саласенҫи пупсем те, ҫиркӳ тумӗ (риза) тӑхӑнса, Архіерейе хирӗҫ хӗреспе, турӑшсемпе тухнӑ. Архіерей мантія тӑхӑнса пырса хӗресе ҫуп-тусан, ҫиркӗве кӗнӗ; унта кӗске кӗлӗ (молебен) пулнӑ, ун хыҫҫӑн протодіакон уншӑн ӗмӗр вӑрӑм пултӑр тесе каланӑ. Кайранхи хутӗнҫе монастыр пуҫлӑхӗпе монахсенӗн ӗмӗрисем вӑрӑм пулҫӑр тесе, Архіерей хӑй каланӑ. Ҫиркӗве пӑхса пӗтерсен, Архіерей пурне те пӗрле пиллӗх панӑ, унтан вара хӑй валли йури хатӗрлесе хунӑ пӳлӗме кайнӑ.

Ҫав никам пурӑнман ҫӗрте ҫав тӗрлӗ йышлӑ ха-

лăхпа, çав тĕрлĕ ҫапла кĕтсе тăни Архіерей кăмăлне пит савăнтарнă. Вăл инçе çулта нумай çӳресе ывăннă пулин те, канман; çавăнта тăвас кĕлĕсен йĕркине: каçхи кĕллĕнне, ҫиркĕве кĕл-туса тасатмаллинне, кăнтăрлахи кĕллĕнне, кирлĕ йĕркесене урăххисене те соборти протоіерей атте урлă кăтартса каласа панă та, хăй каçхи кĕлле хатĕрлене пуçланă.—*(Кар. № 2).*

Ултă сехет çурăра каçхи кĕлле ҫан çапа пуçланă. Высокопреосвященнѣйшій Димитрій мантія тăхăнса, хăйне пулăшакан пупсемпе ҫиркĕве утса пынă. Вăл утса пырас çул çине пир сарса, курăксем пăрахса тухнă. Çын пит нумай пуçтарăннипе каçхи кĕлле, Архіерей хушнă тăрăх, ҫиркӳ тулашĕнҫе, уçă çĕрте тунă: çавăлте пуçтарăннă ҫăваш халăхĕ çав майпа вара пур те хăйсен Архіерейĕпе куçа-куçăн тăрса пĕрле кĕл-тумалла пулнă. Каçхи кĕлле ытти пупсемпе пĕрле архимандрит Аркадій тунă. Литіяна, поліелейе Высокопреосвященнѣйшій Димитрій хăй тухнă; çынсене те таса йывăç çăвĕпе хăй сĕрнĕ. Йурлакансем килĕшӳлĕ йурлани те кĕлĕ илемне пит аван кӳрсе тăнă. Йурлакансем икĕ ушкăнпа йурланă. Пĕр ушкăнĕнҫе çавăнтан инçе мар Ахманей йалĕнҫи ҫăваш аҫисем пулнă; вĕсене хăйсен пупĕ В. Громов йурлаттарнă. Йурласса славянла-та, ҫăвашла та ылмăша ылмăша йурланă.

Çав авалтанпа ӳсекен сĕм-вăрманта, никам пурăнман вырăнта, уçă çĕрте темĕн ҫухлĕ халăх пуçтарăнса кĕл-тунине курса тăни кăмăла темĕн тĕрлĕ çемçетсе, савăнтарса тăнă. Пурăнăç хаваслĕхĕпе, ҫун савăннипе Турра пит ҫаплă кĕл-тунă çĕрте, çап-çутă йалтăртатса тăракан тумтир тăхăнса ушкăнпа тăракан пупсемпе пĕрле çавăнта Архіерей хăй пит тăрăшса кĕл-тунă. Темиçе пин ҫăваш пит илемлĕ ҫăваш-тумĕсемпе пупсем тавра йĕрки-йĕркипе тăнă. Вĕсен хĕпĕртесе, тĕлĕнсе кайнă пиҫĕ-куçĕсем Архіерей çинҫе пулнă: вăл мĕн ту-

нине, мĕн каланине пурне те пăхса, сăнаса тăнă. Архіерей кĕл-туни курăнакан çӳлĕрех вырăнсенҫе пур çĕрте те халăх пулнă. Нумайĕшĕ йывăçсем çине улăха-улăха тăнă. Çавна курса тăнă çĕрте ҫăвашсен ĕлĕк туса пурăннă тĕксĕм ĕçĕсем ирĕксĕрех аса килнĕ. Ĕлĕк çав ҫăвашсемех çав вăрманта усал киремет пурăнаť тесе ĕненнĕ, унтан темĕн тĕрлĕ хăранă, ăна хăйсен суйа тĕнĕ йĕркипе пĕр усса килмен ҫӳк туса, ахалех пуççапса пурăннă. Халĕ ĕнтĕ çавăнта ҫăвашсем хăйсен Архіерейĕпе пĕрле пĕр хăрамасăр, ырă кăмăлпа, ҫунтан-вартан тăрăшса, етеме йуратакан ҫăн Турра, Унăн ырă кăмăлĕ çине шанса кĕл-тунине курса, ҫуна савăнтаракан темĕн тĕрлĕ ырă шухăш кĕрсе тăнă.

Каçхи кĕлĕ вунă сехет тавăрашĕнҫе пĕтнĕ. Кĕлĕ пĕтес умĕн унҫҫен уйар тăнă çанталăка çумăр пĕлĕҫĕ хупласа килнĕ. Çумăр çумасăр вăрах тăрса çĕр пĕтĕмпе типсе çитнĕ хыççăн çавăн ҫух пит вăйлă çумăр çунă. Турра хисеплекен ҫăвашсем вăл ĕçе сăнамасăр йулман: вĕсем ăна Христоса ĕненекен ҫăвашсемшĕн çав тĕрлĕ паллă, çав тĕрлĕ савăнăçлă кĕл-тунă кун Архіерей кĕллипе Турă уйăрăмах хăйсене кăмăл курнине кăтартнă паллă вырăнне хунă. Çĕрĕпе вăйлă çумăр çунă пулин те, Турра пуççапма пынă ҫăвашсем нумайĕшĕ çывăрма йалсене кайман, çавăнта монастырех йулнă. Монастырĕн кĕрсе выртмалли витнĕ хурталтисем çуккипе вĕсем йывăçсен айне кĕре кĕре ларнă; пит нумайĕшĕ тата монастыр çурҫĕсем çумĕнҫе тăрса ирттернĕ. Çав çĕре çапла пĕр хăрамасăр тӳссе ирттерме унта вĕсене мĕн хушнă пулаť ĕнтĕ? Хамăрăн Іисус Христос Туррăмăра ҫунтан-вартан ĕненнипе Турă ҫиркӳне аҫа пек пăхăнса тăни тӳстернĕ вĕсене. Христос тĕнĕ хăй вăл çапла хăватлă: вăл пăсăлман йăваш çыннăн ҫĕрине кĕрсен, ăна кăмăлне аванлантарасшăн тăрăшакан çын, нимĕнтен те хăраман хăватлă çын тăваť.

Çӗртме уйăхин 15-мӗш кунӗнҫе, çав монастырӗн пит савăнăçлă, пит пысăк ӗçӗ çинҫен пӗлтерекен кун ирхине, ӗлӗк никам пурăнман, халӗ монастыр пулса тăнă вырăн—халăх пырса ларнă, пит хыпаланса тăрăшакан йал пек пулса тăнă. Çанталăк аван пулнă. Турра пуççапма пынă ҫăвашсем—арçынни те, хӗр-арăмӗ те, ватти-вӗти пур те, ушкăнӗ-ушкăнӗпе савăнса пӗр хăрамасăр монастыр çӗрӗ тăрăх ҫиркӳне, çурт таврашӗсене пăхса уткаласа çӳренӗ. Ун ҫухне ӗнтӗ вӗсемшӗн суйа тӗнӗн киремет вырăнӗ хăрушă пулман. Халăх пуринҫен ытла Архіерей кӗнӗ çурт патӗнҫе нумай пулнă, вӗсем вăл тухасса кӗтсе тăнă. Çав савăнăçлă праçнике ҫăвашсем иртнӗ кунхинҫен тата ытла пухăннă: унта пӗр çиҫӗ пине йахăн ҫăваш пулнă. Нумайӗшӗ инçетрен, урăх уйассенҫен те пынă.

Ирхине çиҫӗ сехетре монастыр пуçлăхӗ Антоній ҫиркӳре шыв кӗл-туса тасатнă. Сакăр сехетре кăнтăрлахи кӗлле ҫан çапа пуçланă. Архіерей мантія тăхăнса, ҫиркӗве 8 сехет те 15 минутра пынă; унăн умӗнҫен унпа пӗрле кӗл-тумалли пупсем пынă; вăл утса пырас çул çине ҫăвашсем шурă пир сарса тухнă. Турра кӗл-тума пынă ҫăвашсем çулăн икӗ айккипе, çапса хӗснӗ пек, ӗреҫӗ ӗреҫӗпе тăнă.

Архіерей хăйӗн кӗл-тунă ҫухнехи тумтирӗсене тăхăнсан, архиминдрит Аркадійпе, Хусанти собор протоіерейӗ А. Яблоковпа, благочинный А. Добросмысловпа, тата çармăс монастырӗнҫи икӗ монах-пуппа пӗрле ҫиркӗве кӗл-туса тасатмалли кӗлӗ йӗркине пуçланă. Ҫиркӗве кӗл-туса тасатмалли кӗлӗ йӗркинҫи пысăк ӗçсем çинҫен пӗлтеркен, пӗлме çук сисӗнекен таса ӗçсене: престола çунине, ăна таса миропа сӗрсе тумтир тăхăнтарнине, тата ыттисене те пит пысăк хисеппе Архіерей хăй туни, тата çавăн ҫухне тăвакан кӗлӗсенҫи ырă сăмахсене вăл пит ăнламалла илтӗнтерсе ву-

лани халăх ђĕрине нихăçан манмалла мар хытă кĕрсе йулнă. Пуринђен ытла Архіерей святойăн çĕрми ўтне хăйĕн пуçĕ çине хурса, ђиркў тавра çавăрăнни пит ђаплă, пит ђуна савăнтармалла пулнă: унта Архіерейпе пĕрле пупсем, діаконсем утса пынă, вĕсен умĕнђен турăшсем, ђиркў йалавĕсем çĕклесе пынă; Архіерей çапла святой ўтне хăй пуçĕ çине хурса утса пыни мухтавлă Патша, çарсенĕн Турри утса пынине пĕлтернĕ: *Ей пуçлăхсем, илĕр хапхăрсене! ей ĕмĕрхи хапхасем, çĕкленĕр! Мухтавлă Патша кĕрет. Кам Вăл мухтавлă Патша? Çарăсенĕн Турри, Çавă мухтавлă Патша!* Темиçе пин халăх ђиркў йĕри-тавра ђăркуçланса ларса, çуртасем тытса, пит ырă хисеппе çавăн çине пăхса тăнă. Ђиркĕве кĕл-туса тасатнă йĕрке „Ĕмĕр вăрăм пултăр“ тесе йурланипе пĕтнĕ. Ун хыççăн Архіерей çав монастыре унăн пуçлăхĕ Антоній игумен атте урлă Хусанти Турă Амăшĕ сăнне пиллесе панă. Çавăн ђух Архіерей монастырти монахсене ак çапла ырă · сăмах каланă: „Ей Антоній игумен атте! халĕ ĕнтĕ ху пăхса тăракан монастыр ђиркĕвĕне кĕл-туса тасатнă савăнăçлă праçник йĕркипе сана, санăн çак монастырўнти нумай мар монахсене, пурсăра та пĕрле ырлăх-сывлăх сунатăп. Пайанхи кун çак монастыршĕн пит паллă кун; эсир ăна уйăрăмах асăрта тытса тăмалла; мĕншĕн тесен ку монастыр, ђиркўсĕр-мĕнсĕр пĕр ђухăн пўртсенђен анђах пусланса кайнăскер, эпир çак ђиркĕве кĕлтуса тасатнă кунран тин тирпейленсе пырса ырăлăхпа пурăнма пуçлĕ. Сирĕн ђиркў пысăк мар; вăл пит ђухăн; пĕђĕкçĕ пўрт пек анђах. Çапах та эсир ак çакна астăвăр: алăпа тунă çуртсем темĕн тĕрлĕ ђаплă пулĕçин те, Турă унта пурăнмасť. Тата ак çакна та ан манăр: пирĕн Вырăс патшалăхĕнђи пур ђаплă монастырсем те пуçланнă ђух малтан ђухăн пулнă, унтан пĕђĕкçĕн пĕђĕкçĕн аслăланнăçем аслăланса пырса. тин вĕ-

сем телейлĕ пурăнакан пулнă; халĕ ĕнтĕ вĕсен тĕлĕнмелле пысăк ҫиркĕвĕсем пула-пула тăнă; унта Вырăс патшалăхин пур вĕҫĕнҫен-хĕрринҫен те Турра пуҫҫапма пуҫтарăнаҫҫĕ. Епĕ сирĕн ҫак ҫамрăк монастырĕр те ҫапла пысăкланнăҫем пысăкланса пырса ырăлăхпа пурăнакан пултăр тесе сунатăп: кунта та пысăк ҫиркӳ пултăр-ҫĕ, ҫак монастыр йепле пуҫланса кайнине кăтартса тăмашкăн ку ҫиркӳ те пурăнтăр-ҫĕ, тетĕп. Епĕ сирĕн монастырĕр пысăкланассине хытă шанатăп. Ĕнер кунта пирĕнпе пĕрле Турра кĕл - тăвас тесе мĕн ҫухлĕ халăх пуҫтарăннă-ҫĕ?! Вĕсем кунтан, ҫумăр темĕн тĕрлĕ йухтарса ҫурĕ пулин те, саланмарĕҫ. Пайан халăх ĕнерхинҫен тата нумай пуҫтарăнҫĕ. Ăна епĕ ҫак монастыр йепле пулассине малтан кăтартакан паллă вырăнне, вăл пысăкланассине кăтартса тăракан шанҫăк вырăнне хуратăп. Ку монастыр кăмăл хыҫҫăн кайнипе, йе хăйсен ҫунĕсене ҫăласшăн пĕр-ик ҫын анҫах тăрăшнипе пулман, вăл мĕн пур ҫак таврари Христоса ĕненекен ҫăвашсем хăйсен ырă кăмăлĕ турткипе ҫунĕсене ҫăласшăн ҫунса тăнă тăрăх пулнă. Халĕ ĕнтĕ, тăвансем, ҫак монастыр ырă кун-ҫул курасси, вăл пысăкланса пырасси сиртен килмелле; есир монах пурăнăҫĕпе аван пурăнăр; ҫиркӳ кĕллисене тĕрĕс, ырă хисеппе туса тăрăр; хăвăр патра килекенсене пурне те ăшă кăмăллă, йăваш пулăр; вĕсене ҫуншăн мĕн кирлине кăмăлтан хавас туса каласа парăр, вĕсен кăмăлĕсене тултарăр, Турра пуҫҫапма килекен ырă ҫынсем хăвăра йуратмалла пултăр, хăвăрăн ăшă кăмăлăрпа ҫынсен кăмăлĕсене ҫак монастыре йуратса тăмалла тăвăр. Ҫак ҫĕнĕ монастыре ырă йĕркелĕ туса ҫитерме, сире ҫăн тĕне тытса пурăннă аслă княҫ святой Александр Невскій пулăштăр: ҫак ҫиркĕве ĕнтĕ унăн йаҫĕпе кĕл-туса тасатрăмăр; тата унăн хутне Турă Амăшĕ кĕрсе, ăна витсе тăтăр: Унăн Хусанти ырă таса сăнне епĕ пайан

сирӗн ҫак ҫӗнӗ монастырӗре ырӑ сунса пиллесе паратӑп.

Игумен Антоній атте ҫав турӑшне йӗрсе куҫ-ҫулӗпе ҫуп-тунӑ. Ӑна Архіерей аллинҫен илсен, вӑл унҫӑн, ҫав монастыре ырӑ сунса панӑ пит хаклӑ парнешӗн Архіерейе, ывӑлӗ ашшӗне тав-тунӑ пек, ҫунӗнҫен-варӗнҫен тав-тунӑ. Вӑл турӑшӗ кӗмӗл тумтирлӗ, ӑна пит аван тунӑ. Унӑн тӳнтерӗш йенне Архіерей хӑй аллипе ак ҫапла сӑмахсем ҫырнӑ: „Божіею милостію Димитрій Архіепископъ Казанскій и Свіяжскій чувашской Александро-Невской обители въ день освященія перваго ея храма во имя св. благовѣрнаго князя Александра Невскаго. 15 іюня 1903 года.“ Ҫӑвашла вӑл: Турӑ ырӑлӑхӗ тӑрӑх Хусанпа Сӗве хулин Архіепископӗ Димитрій Александр Невскій йаҫӗпӗ лартнӑ ҫӑваш монастырне унӑн малтанхи ҫиркӳне кӗл-туса тасатнӑ кун пиллесе пани. Ҫӗртме уйӑхин 15-мӗш кунӗнҫе 1903 султа.“

Ҫӑн тӗне тытса пурӑннӑ аслӑ княҫ святой Александр Невскій йаҫӗпе тив анҫах кӗл-туса тасатнӑ ҫиркӳре кӑнтӑрлахи кӗлле Архіерей ҫавӑнта пулнӑ ытти пупсемпе пӗрле хӑй тунӑ. Кӑнтӑрлахи кӗлӗре те икӗ ҫӗлхепе: славянла та, ҫӑвашла та малтанхи йурлакансемех йурланӑ. Анҫах ҫав ҫаплӑ, пит илемлӗ тунӑ кӗлле пит сахал ҫын ҫывӑхран курса итлесе тӑмалла пулнӑ. Унта ҫав пысӑк савӑнӑҫлӑ ҫиркӳ праҫникне темиҫе пин ҫын пуҫтарӑннӑ, кӗл-туса тасатнӑ ҫиркӗве пӗр ҫӗр аллӑ ҫынтан та ытлах шӑнӑҫман; Турра пуҫҫапма пынӑ ҫӑвашсем ҫиркӳ тулашӗнҫе кӗл-туса тӑнӑ; вӗсем ҫиркӳре кӗл-тунине, унта йурланине уҫнӑ ҫӳреҫесем витӗр те пулин пӗр шавламасӑр, пит тирпейлӗ тӑрса итленӗ. Христоса ӗненекенсемшӗн пуриншӗн те: вилнисемшӗн те, ҫӗррисемшӗн те Архіерей йунсӑр парне кӳнӗ ҫух, вӗсем темӗн тӗрлӗ ырӑ шухӑшпа, ырӑ хисеппе ҫиркӳ йеннелле пӑхса тӑнӑ: ҫавӑлте тунӑ ӗҫсен-

ҫен хӑшне те пулин курса, йе илтсе йулас-ҫӗ тесе, вӗсем уҫӑ ҫӳреҫесенҫен пӑхса тӑрса итленӗ.

Сӑвапшӑн тӑрӑшса ҫиркӳ тулашӗнҫе кӗл-туса тӑнӑ ҫӑвашсен кӑмӑлӗсем те ахаљ йулман: Архіерей хушнипе кӑнтӑрлахи кӗлӗ вӑхӑтӗнҫе А. Добросмыслов пуп ҫиркӳ умне, пусма ҫине тухса ҫав монастыр вӑл таврари ҫӑвашсемшӗн мӗнтен усӑлӑ пуласси ҫинҫен, тата ҫав кунхи ҫаплӑ праҫник ҫинҫен вӗсене ҫӑвашла вӗрентсе каланӑ. Турра пуҫҫапма пынӑ ҫынсем ҫиркӳ тавра темӗн ҫухлӗ тӑнине кура, кӑнтӑрлахи кӗлӗ хыҫҫӑн Архіерей ҫав ҫӗнӗ монастыре ҫӳлтен пӑхса витсе тӑракан, ҫӑн тӗне тытса пурӑннӑ аслӑ кнлҫ святой Александр Невскійе тулта, ӗлӗкхи кун каҫхи кӗлӗ тунӑ ҫӗртех, кӗске кӗлӗ (молебен) тунӑ. Кӗске кӗлӗре те (молебенра) Архіерей хӑй темӗн ҫухлӗ халӑхпа пӗрле кӗл-туни, каҫхи кӗлӗри пекех, пит ҫаплӑ пулнӑ, пит ҫуна савӑнтарса тӑнӑ. Ҫиркӳн ҫав савӑнӑҫлӑ праҫникне вӑл кун уйар, ӑшӑ пулни те пит тӗле килнӗ. Унта пулнӑ ҫынсем пур те ҫав ӗлӗк суйа тӗнлӗ тӗттӗм халӑх пурӑннӑ ҫӗрте халӗ Христос тӗнӗ ҫийеле тухнине курса ӑшӗсене хывнӑ. Молебен хыҫҫӑн малтан Патшапа Патша Ҫемйине, унтан св. Синода, Хусанти Архіепископ Высокопреосвященнѣйшій Димитрійе, ҫав монастырти монахсене, савӑнта кӗл-туса тӑракансемпе Христос тӗнне тӗрӗс тытакансене пурне те Турӑ вӑрӑм ӗмӗр патӑр тесе йурланӑ.

Александр Невскій йаҫӗпе лартнӑ ҫӑваш-арҫын монастырӗнҫи ҫиркӗве кӗл-туса тасатнӑ савӑнӑҫлӑ праҫник йӗрки ҫапла пулса иртнӗ. Ҫав кунтан тӗттӗм ҫӗрти ҫӑвашсен суйа тӗнӗн тӗттӗм йеркисене тытса тӑрасси пӗтнӗ, вӗсем Христос тӗнне тыта пуҫланӑ. Ҫавӑҫти киремете пуҫҫапса тӑракан ҫӗрти ҫӑвашсене хупласа илнӗ суйа тӗнӗн тӗттӗмӗ, унтан хӑраса, сехӗрленсе тӑрасси ӗмӗрлӗхе сирӗлнӗ; унта ӗнтӗ Турӑ вырӑ-

naçнă, унта Туррăн çурҭĕ пулса тăнă; вăл çĕре ĕнтĕ халĕ Христоса ĕненекен халăхшăн тăрăшса хута кĕрсе тăракан Турă Амăшĕ витсе тăрат. Унта суйа тĕн йĕркипе усăсăр киреметсене пуççапса, ҭӳк туса тăма вырăн çук ĕнтĕ. Малашне ĕнтĕ унта ҭăн Турра, хĕрхенекен кăмăллă хăватлă Турра—Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлашне—таса ҭунтан-вартан, пĕтĕм ҭĕререн кĕлтуса, пуççапса тăрĕç; çавăнтах хамăр Туррăмăр Іисус Христосăн Атте Турă кăмăлне çавăракан йунсăр парнине кӳрсе тăрĕç. Турă Хăйне тĕрĕс хисеплекенсенĕн çылăхĕсене пуринне те çав парне тăрăх каçарса, пурне те çăлĕ. Çав тăрăх ĕнтĕ, ҭăвашсем, пурсăр та есир çавăнта пыма тăрăшăр! Инкек пулсан, хуйхă пулсан, Туррăн ырă кăмăлĕ çине шанса, пĕр хăрамасăр пырăр унта: есир хăвăр валли канăçлăх çавăнта тупăр, çавăнта ҭунăрсене пусарăр.

Çав тĕрлĕ пысăк, савăнăçлă пулнă праçнике асра тытса тăҭҭăр тесе, Высокопреосвященнѣйшій Димитрій, халăха валеçсе пама хушса, монахсенĕн пуçлăхне Антоній аттене хĕрессем панă; вĕсене вăл хăй илсе пынă, анҭах халăха хăй аллипе валеçсе пама унăн вăхăт пулман.

Пăртак кансассăн, Архіерей монастыр çĕрне, тата çавăнта ҭи малтан пырса пурăна пуçланă çынсенĕн ту хĕрринҭе ларакан пӳрҭĕсене—монастыр пуçламăшне—пăхса çӳренĕ; çавăн ҭухне игумен атте Архіерейе ҭи малтан тăрăшакан, çав монастыре хăй пуçласа йаракан Кузьма Иванов йатлă çынна кăтартнă; Кузьма Иванов вăл Хаҭăк-Касси ҭăвашĕ, çыру пĕлмест, çĕр ĕçлесе пурăнакан çын. Архіерей унпа пит ăшă кăмăллă калаçнă; унтан пиллесе, ăна: Турă мухтавĕшĕн монах пурăнăçне хытă тыт, монастыре йалан ырă йĕркелĕ тума тăрăш, тесе ырă суннă.—*(Кар. № 3)*.

Монастыр çурҭĕсем халĕ пит ҭухăн. Ту хĕрринҭе, ҭиркӳрен инçе мар, монастыр пуçлахĕ валли пĕр-хутлă

йывăç пÿрт, тата хуралçă валли пĕр хушă пек пÿрт лараççĕ; ту çурринҫе, çавсем пекех, монастыр пуçланса кайиҫҫен тунă пĕҫĕксçеççĕ пÿртсем лараççĕ. Çав пÿртсенҫе монахсене пурăнма уйăрăм уйăрăм пÿлĕмсем (келйасем) тунă, унта апат хатĕрлеççĕ, апат çийеççĕ; тата çав ĕретрех йалти мунҫа пек мунҫа лараҫ. Монастырĕн тата ту айне тунă пĕр пĕҫĕксĕ пахҫипе утарĕ пур.

Вăл монастыре сăвапшăн пурăнакан ҫăвашсем тăрăшнипе тунă. Вĕсем ăна ырă йĕркене кÿртсе çитерес тĕлĕшрен те мĕн вăй çитнĕ таран пулăшĕç. Вăл монастыре мĕн кирлĕ таран ырă илеме кÿртсе çитермешкĕн, пĕтĕм ҫăвашсем ун урлă Христос тĕнĕ çинҫен вĕренсе çутăлҫҫăр тесен, ҫăн тĕне хакла хуракансем, вырăс мар халăхсене (ҫăвашсене, тутарсене, çармăссене, арсене, тата ыттисене те) çутăлтарасшăн тăрăшакансем пур те вăл ĕçе кăмăлтан тăрăшса туни кирлĕ.

Виçĕ сехетре Архiерей хăйпе пĕрле çав ҫаплă праçникре кĕл-тунă пупсемпе, дiаконсемпе, тата çавăлте йури ҫĕннĕ хăнасемпе пĕрле апат тунă.

Тăватă сехетре монастыр монахĕсем хăйсен Архiерейне ăсатса йанă; ăсатнă ҫух вĕсем ăна çав ҫиркÿ савăнăçне, монастырĕн пит паха праçникне ҫаплă тунăшăн, аҫисем ашшĕне тав-тунă пек тав-туса йанă. Архiерейрен пиллĕх илсе йулас тесе, ăна ăсатма ҫăвашсем те нумай пуçтарăннă. Архiерей монастырти монахсене, унта пулнă çынсене пурне те пилленĕ, монастыре те пысăкланма ырă суннă. Унтан вара Ишеке тухса кайнă.

Ĕнтĕ çак монастыр ырă йĕркене кĕрсе илемленсе пытăр; вăл çав тĕттĕм çĕрте Христос тĕнĕ тĕлĕшĕнҫен аҫа пек пурăнакан ҫăвашсем хушшинҫе çутатса тăракан çутă пултăр. Ун урлă çывăхри ҫăвашсем хушшине те, инçетрисем хушшине те ҫăн тĕнпе таса пурăнăç çутти саралтăр.